25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АПРЕЛЬ 10 ЭРНЕКУН 84 (6019) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

58. **Николай Николаевич Желтухин**—Куславкка МТС-ĕнчи тракторист. Желтухин юлташăн 1941 çулта план тăрăх 168 гектар ĕçлемелле пулнă, вăл 364 гектар ĕçленĕ, горючи 1.136 килограмм перекетленĕ. Хăйĕн тракторне çуракине отлично хатĕрлесе çитерне.

59. **Куприян Иванович Терентьев**—Куславкка МТС-ĕнчи тракторсен бригадин бригадирĕ. Терентьев юлташăн бригади тракторсемпе вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре мартăн 1-мĕш тĕлне йăлтах юсаса пĕтерне. Халыхи вăхăтра Терентьев юлташ ытти бригадăсенчи ялхуçалăх инвентарьне юсанă çĕрте тимĕрçĕ пулса ĕçлет.

60. **Илья Тимофеевич Кушков**—Куславкка МТС-ĕнчи тракторсен бригадин бригадирĕ. Кушков юлташăн бригади 1941 çулта горючи 3.500 килограмм перекетленĕ. Тракторсем юсас тĕлĕшпе Кушков юлташ питех те кăтартуллă ĕçленĕ, тракторсен запас пайĕсене киввисене юсаса çĕнетнĕ чухне тата çĕнĕрен тунă чухне те ĕçре питех те лайăх меслетсем кăтартнă.

61. **Григорий Андрианович Баганов**—Куславкка МТС-ĕнчи разъездной механик. Тракторсем юсанă вăхăтра вăл 32 комплект подшипник юсанă тата радиаторăн 30 варрине çапланă. Баганов юлташăн ĕçне лайăх тесе йышăннă.

62. **Шăхасан районĕнчи Шуркасси ялсоветне кĕрекен «1-й май» колхоз** (колхоз председателĕ **П. А. Александров** юлташ). Колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха йăлтах сортласа хатĕрлесе хунă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Хире 1.690 лав тислĕк кăларнă, 18 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 25 центнер кĕл пухнă, 4 тонна минераллă удобрени илсе килнĕ. Ялхуçалăх ивентарьне, лаша кӳлмелли хатĕрсене юсаса çитернĕ. Лашасем çуракине тухма хатĕр.

63. **Шăхасан районĕнчи Çĕнĕ Мами ялсоветне кĕрекен «Красный партизан» колхоз** (колхоз председателĕ **И. М. Моисеев** юлташ).

Колхоз çуракинче акма кирлĕ вăрлăха пĕтĕмпех сортласа хатĕрлесе хунă, акма юрăхлă кондицие çитернĕ. Хире 1.200 лав тислĕк кăларнă, 27 центнер кĕл, 36 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Мĕнпур ялхуçалăх инвентарьне, лаша кӳлмелли хатĕрсене юсаса çитернĕ.

Промкомбинатсемпе артельсен ĕçне тăтăшах вăйлатса пырар

Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçре вырăнти промышленность питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Германи фашизмне хирĕç отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра, тĕп промышленность йăлтах фронтшăн ĕçленĕ вăхăтра, вырăнти промышленноçăн ролĕ татах ӳсет. Унăн халĕ, тăван Хĕрлĕ Çара кирлĕ продукцисене парса тăнипе пĕрлех, ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем çителĕклĕ туса кăлармалла.

Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлама вырăнти промышленноçăн пур майсем те çителĕклĕ. Вăл хăйне кирлĕ чĕртаварпа ĕç вăйне вырăнтах тата кирлĕ таранах тупма пултарать. Туса кăларнă таварсене те вырăнтах вырнаçтармалла. Унсăр пуçне государство ăна çĕнĕ предприятисемпе производствăсем уçма укçа парса пулăшать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерессишĕн» ятарласа постановлени йышăнчĕç. Вырăнти промышленноçăн мĕнле ĕçлемеллине вăл постановленире уççăн кăтартса панă.

Çапла пулин те, ертсе пыракансем пултаруллă та пуçаруллă пулни, вĕсем ĕçшĕн тăрăшни çеç кирлĕ. Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсемпе парти райкомĕсем вырăнти промышленность çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхни, районри мĕнпур майсемпе тата чĕртаварсемпе усă курни, ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçе çирĕппĕн ертсе пыни кирлĕ.

Çакăн пек çĕрте вырăнти промышленность начар мар ĕçлет. Шăмăршă районĕнчи промкомбинат хуçалăхра куллен кирлĕ таварсемпе япаласем туса кăлармалли 1941 çулти плана ытлашшипех тултарнă. Çав вăхăтрах вăл çăматă йăвалас, йĕлтĕр, катка-пичке тата тир тăвас ĕçсене организациленĕ. Промкомбинат кăçал та малта пырать. Январь уйăхĕнче вăл, планпа пăхман пулин те, пин мăшăр лайăх пахалăхлă йĕлтĕр туса кăларнă. Халĕ уйăхри плансене ирттерсе тултарнипе пĕрлех супăнь, кашăксем тата ытти япаласем туса кăларас ĕçе пуçарать, çĕвĕçсен цехне уçать. Кунти стахановецсем çĕршыв умĕнчи хăйсен обязанноçĕсене туйса ĕçлеççĕ. Çуна тăвакансем И. Спиридонов, И. Корчагин, тимĕрçĕсем П. Полянкин, С. Корчагин, пĕкĕ авакан В. Алексанин юлташсем кулленхи нормăсене вăтамран 200 процент тултараççĕ.

Шăмăршă районĕнчи промысла комбиначĕ тунă çак çитĕнӳсем унти работницăсемпе работницăсем тăрăшса ĕçленинчен анчах мар, ĕççынни депутачĕсен райсовечĕпе ВКП(б) райкомĕ вырăнти промышленность ыйтăвĕсемпе тăтăшах интересленнинчен, ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе тивĕçлипе ертсе пынинчен те килнĕ.

Вăрнар районĕнчи партипе совет организацисем тата вырăнти промышленность предприятисем пирки те çакнах каламалла. Район совечĕпе ВКП(б) райкомĕ вырăнти промышленность ыйтăвĕсене час-часах сӳтсе-яваççĕ, предприятисемпе артельсене ĕçре пулăшусем парса тăраççĕ. Çавăнпа кунти промкомбинат та начар мар ĕçлет. 1942 çулти пĕрремĕш квартал планне срокчен тата ытлашшипех тултарнă. Унпа пĕрлех комбинат вырăнти чĕртаварсемпе туллин усă курас, çĕнĕ продукцисем туса кăларас тĕлĕшпе те пуçарулăх кăтартать.

Анчах çав вăхăтрах хăшпĕр çĕрте вырăнти промышленность ĕçĕ хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларни те пур-ха. Ку тĕлĕшпе Красноармейскипе Первомайски районсене илсе кăтартма пулать. Кунти промкомбинатсем руководителĕсемсĕр те лараççĕ. Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ çавна курса тăраççĕ пулин те, промкомбинатпа артельсен ĕçне вăйлатас, вырăнти чĕртаварсемпе туллин усă курас тĕлĕшпе нимĕнех те тумаççĕ.

Ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси пысăк та хисеплĕ ĕç. Пирĕн предприятисемпе артельсем халĕ вĕсене нихăçанхинчен ытларах туса кăларма тивĕçлĕ, мирлĕ вăхăтри пек ытти крайсемпе облаçсенчен кӳрсе килессине шанса лармалла мар. Анчах чылай районсенче хуçалăхра куллен кирлĕ япаласене туса кăларас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, Ишлей, Советски тата Елчĕк районĕсенчи тăмран кӳршек-чӳлмексем тăвакан мастерскойсем 1942 çулти январьпе февраль уйăхĕсенчи ĕç планне 30—50-шар процент кăна тултарнă. Сĕнтĕр, Куславкка тата Çĕрпӳ районĕсенчи мастерскойсем вара ку тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен.

Вырăнти промышленность ĕçĕсене лайăхлатас ыйту вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах çивĕччĕн тухса тăрать. Районсенчи партипе совет организацисен ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларас ĕçе большевикла ертсе пымалла, кашни предприяти, кашни артель хăйне панă плансене ытлашшипех тултарса пымалла тăвассишĕн кĕрешмелле.

Заданисене ирттерсе тултараççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Катеркассинчи «Заря» колхоз членĕсем вăрман хатĕрленĕ çĕрте вăрçă вăхăтĕнчи тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Колхозран панă задани тăрăх кашни çыннăн 14 кубометр вăрман хатĕрлемелле пулнă. Колхозниксем çак задание чылай ирттерсе тултараççĕ. К. Егорова, А. Васильева, К. Смирнова колхозницăсем ку таранччен 30-шар кубометр, В. Бурцов юлташ 42 кубометр хатĕрленĕ.

Малта пыракан колхозниксем çавăн пек тăрăшса ĕçленине пула, колхоз вăрман хатĕрлев планне çак кунсенчех тултарать.

С. Т.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 8-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсем çинче противникăн 51 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 14 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 5.500 тонна водоизмещениллĕ транспортне тата нимĕçсен 10.500 тонна водоизмещениллĕ тепĕр транспортне путарнă.

* * *

Апрелĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 5 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 56 тавне, горючи тултарнă 9 автоцистернине, 5 тягачне, 29 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, горючи хунă склада тата боеприпассем хунă 4 склада сирпĕнтерсе янă, 8 вагон тата 3 паровоз çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 3 ротăна çити саласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсем, активлăн çапăçса пырса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.500 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 13 пулемет тата пулеметсен запасра тăракан 23 стволне, 18 миномет, 13 автомат, 200 винтовка, 325.000 винтовка патронĕсем, 8.000 ытла мина, 3.300 снаряд, 11.000 граната, радиостанци, 160 противогаз, 9 мотоцикл тата ытти тĕрлĕ снаряжени.

* * *

Пирĕн гвардейски часть (Хĕвеланăç фрончĕ), тăшманăн оборона узелне атакăласа, 7 дзот тата пулеметсен 9 расчетне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлернĕ. Çапăçу хирĕ тĕлĕнче зенитчиксем нимĕçсен истребительне персе антарнă. Кӳршĕри участокра пирĕн часть нимĕçсен темиçе контратакине сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Противникран 9 пулемет, 1 миномет, грузсем тиенĕ 62 лав тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсем контратака пуçласа янă. Пирĕн боецсем гитлеровецсем çине артиллерирен, минометсенчен тата пулеметсенчен аркатмаллах пеме пуçланă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 500 ытла вилли выртса юлнă, тăшманăн каялла чакма лекнĕ. Çав çапăçура минометчиксем тĕл пересси тĕслĕхĕсене кăтартнă. Вĕсем нимĕçсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Саулинăн тата лейтенант Набикеевăн батарейисенчи минометсем, çавăн пекех тата Брод, Бобровский тата Сидельников юлташсен минометнăй расчечĕсем хăйсене уйрăмах палăртнă.

* * *

Разведкăран таврăннă чухне красноармеец Беляков юлташ нимĕçсен засадине асăрханă. Совет разведчикĕ противник патне çывăхах шуса çитнĕ те, темиçе граната вăркăнтарса, 17 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен вилнĕ обер-ефрейторĕн Эрих Гофманăн дневникĕнчен илнĕ татăксене кĕскен пичетлетпĕр:

«1942 çулти январĕн 17-мĕш. Эпир лакмаллипех лакса ларнă пек туйăнать мана. Ку таранччен тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсем çумне тата каялла чакнин намăсĕ хутшăнчĕ. Пирĕннисем танксене пăрахнă, вĕсене çĕмĕрсе лӳчĕркесе пĕтернĕ. Халь эпир пĕр ĕççĕр ларатпăр. Киле çитсе курма питех те лайăх вăхăт.

Январĕн 23-мĕш. Машинăсемсĕр тăрса юлнă танкистсене пурне те пехотинецсем туса хучĕç. Çав телеех артиллеристсене те нумайĕшне пырса тиврĕ.

Январĕн 30-мĕш. Çĕрле пире вырăссем сасартăк атакăларĕç. Салтаксемшĕн нумайĕшсемшĕн ку çĕр юлашки çĕр пулчĕ. Манăн чи çывăх тусăмсем: Штейн, Бреджнайдер тата Бауэр пĕтрĕç.

Февралĕн 15-мĕш. Пирĕн мĕнпур калаçусем те пĕр тĕле пырса тĕкĕнеççĕ: пире хăçан улăштараççĕ-ши?

Февралĕн 28-мĕш. Хуйхăллă телейсĕр кунсем. Çуркунне наступлени пуçланса каясси çинчен питех те нумай калаççĕ. Пурте хускалса кайнă. Ватă салтаксем: «Эпир вăрçăпа мăй таранах тăранса çитнĕ. Халĕ 1939 çултанпах хупахсенче ларса ирттернĕскерсем тата çĕнтерӳ çинчен сассисем пӳлĕничченех кăшкăракансем вăрçса пăхчăр», теççĕ.

Мартăн 3-мĕш. Таса кĕпе-йĕм çинчен ĕмĕтленни пустуй ĕç кăна. Пĕтĕм ӳт-пӳ кĕçĕтет. Пыйтăсем аптăрататççĕ. Ăнланма çук — мĕн пирки хаçатсем тата радио та çуркуннехи наступлени çинчен çавтери шавлаççĕ? Вăрçă секречĕсене нихăçан та никама та пĕлтерекен марччĕ-çке.

Мартăн 17-мĕш. Юлашки ĕмĕт пăчланчĕ. Пире улăштарасси çинчен шухăшлама та чарса лартрĕç.

Мартăн 23-мĕш. Пирĕн атакăсем пурте ăнăçсăр пĕтсе ларчĕç.

Эпир пирĕн умра стена пек вут тăкакан вырăна пырса тăрăнтăмăр. 4 машинăна вут хыпса илчĕ. Ортманăн танкĕнче мотор ĕçлеме пăрахрĕ. Хальтерех килнĕ салтаксем нумайĕшĕ танксене пăрахса тарчĕç. Кам пĕлет, — çак ĕç мĕнпе пĕтĕ-ши вăл?»

* * *

Нимĕç оккупанчĕсенчен халĕ ирĕке кăларнă Подбелье ялĕнчи (Ленинград облаçĕ) çынсем гитлеровецсем тыткăна илнĕ красноармеецсене асаплантарни çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: Ленинград облаçĕнчи Подбелье ялĕнче нимĕçсен командованийĕ тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен лагерь организациленĕ. Нимĕçсен ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен кунта темле те мăшкăллатчĕç. Вĕсене çĕрнĕ çĕрулмирен пĕçернĕ шӳрпе çитеретчĕç. Гитлеровецсем тыткăна лекнĕ красноармеецсем çинчен мĕнпур тумтире, атă-пушмаксене хывса илчĕç. 30—35 градуслă сивĕсем вăхăтĕнче красноармеецсене сарайсенче тата хутман мунчасенче усрарĕç. Йывăр чирленĕ красноармеецсене нимĕçсем пурне те пере-пере пăрахрĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакса кайма тивсен, гитлеровецсем сывмар пулнă 9 красноармееца мунчана хупрĕç те, тултан питĕрсе илсе, вут тĕртсе ячĕç. Палачсен аллинчен çак ялта тыткăна лекнĕ красноармеецсем мĕнпурĕ 60 çын ытла пĕтнĕ. Нимĕç бандичĕсен тискер кайăкла ĕçĕсем çинчен калакан акта Подбелье ялĕнчи колхозниксем алă пуснă: А. Ефтеева, П. Я. Пантелеева, район совет исполкомĕн членĕ Е. П. Петров тата батальоннăй комиссар М. С. Фадеев.

* * *

Юлашки вăхăтра Греци патриочĕсем Германипе Итали оккупанчĕсене хирĕç пыракан хăйсен кĕрешĕвне вăйлатса ячĕç. Грецири хуласемпе ялсенче халĕ час-часах нимĕçсемпе итальянецсен виллисене курма пулать. Март уйăхĕнче Грецири чугунçулсем çинче темиçе хут та çар эшелонĕсене сирпĕнтерсе янă. Уйрăмăнах пысăк крушени Ксанти тата Комотини хулисем хушшинче пулнă. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çынна яхăн пĕтнĕ, темиçе вуншар грузовой машинăсемпе прожекторсем çĕмĕрĕлсе кайнă.

Апрелĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Богданов юлташ командир пулса ертсе пыракан стрелковăй часть (Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хĕссе кăларнă. Çухатнă позицисене каялла тавăрас тесе, противник контратака тума хăтланнă. Пирĕннисем, артиллерирен тата пулеметсенчен персе, нимĕçсене сирсе пăрахнă. Ял патне пымалли вырăнсем гитлерла салтаксен виллисемпе витĕннĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем, танксемпе усă курса, контратака тума хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшманăн контратакине ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла вилсе выртса юлнă. Нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра юсавлă 4 танк пур.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн стрелковăй батальона нимĕçсен пирĕннинчен йышлăрах вăйĕсем атакăланă. Противникăн темиçе танкне çĕмĕрсе, красноармеецсем, пурте пĕр çын пек харăссăн персе, гитлеровецсене арпаштарса янă, унтан вара штыкпа тăрса çапăçăва кĕрсе кайнă. Пирĕннисем пырса çапнине тӳссе тăраймасăр, нимĕçсем каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче пирĕн санитарсем тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 450 виллине шутласа кăларнă.

* * *

Лопатин командирăн танкĕ, пирĕн наступлени тăвакан войскăсене пулăшса пырса, тăшманăн оборонине шала çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Хăйсен танкĕн вут-хулăмĕпе тата гусеницăсемпе таптаса, танкистсем нимĕçсен 5 противотанковăй орудине, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе вуншар çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Разведчиксен Гавриков лейтенант ертсе пыракан групи, противникăн тылне шăвăнса кĕрсе, нимĕçсен отрячĕпе тĕл пулнă. Автоматсенчен персе тата гранатăсем пăрахса, разведчиксем 35 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшалпа документсем тытса илсе, пирĕн боецсем хăйсен чаçне пĕр çухатусăр таврăннă.

* * *

Будник юлташ командир пулса тăракан дивизионри зенитчиксем нимĕçсен «Ю—88» йышши самолетне персе антарнă. Çав самолета 1942 çулти февралĕн 26-мĕшĕнче 6719-мĕш номерпе туса кăларнă пулнă. Тепĕр темиçе кунран çав дивизионри зенитчиксемех нимĕçсен тепĕр 3 самолетне персе антарнă. Вĕсене 1942 çулти март уйăхĕнче

Юлашки 2-мĕш страницăра

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăшманăн тылĕнче пыракан партизанла кĕрешӳре уйрăмах палăрнă И. И. Никитин, А. В. Петрова, М. С. Харченко юлташсене Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăшманăн тылĕнче пыракан партизанла кĕрешӳре паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене, **Ленин** орденĕпе **«Золотая звезда»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Иван Иванович **Никитина.**
2. Антонина Васильевна **Петровăна.**
3. Михаил Семенович **Харченкăна.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 8-мĕш.

Тасалăхшăн кĕрешĕве тухар

Шупашкарти эрех заводĕнчи рабочисем, служащисемпе инженерно-технически работниксем Шупашкарти мĕнпур ĕççыннисене чĕнсе калани

Гитлеризма хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче тасалăхшăн, санитарипе гигиенăшăн кĕрешни уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн Хĕрлĕ Çара çирĕп сывлăхлă пополнени парса тăрас пулать. Пирĕн предприятисемпе учрежденисем пурте пĕр чарăнмасăр ĕçлесе Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли пысăк пахалăхлă продукци нумайăн парса тăма тивĕçлĕ. Тасамарлăх, санитари тĕлĕшĕнчи тирпейсĕрлĕх, çӳп-çапсемпе пылчăк ĕç тухăçлăхне ӳстерме чăрмантараççĕ, тĕрлĕ чир-чĕрсем сиксе тухса сарăласси патне илсе пыраççĕ, çав чир-чĕрсем пирĕн халăха тата çарсене пысăк сиен кӳме пултараççĕ.

Санитарипе гигиенăшăн кĕрешесси — государствăн питех те кирлĕ ĕçĕ пулса тăрать, вăл çирĕп сывлăхлă тылшăн кĕрешни пулать.

Эпир, эрех заводĕнчи рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем, заводра тата пурăнмалли çуртсенче кăтартуллă тасалăх туса хума йышăнтăмăр, мĕншĕн тесен çавăн пек тума вăрçă вăхăтĕнчи задачăсем хушаççĕ. Эпир ликер цехĕпе столовăйĕнче санитари енĕпе йĕркелĕх туса çитертĕмĕр ĕнтĕ. Анчах пирĕн ку тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулать-ха.

Эпир хамăрăн заводра, рабочисем пурăнмалли çуртсемпе общежитисенче, килкартинче тата çывăхри урамсенче санитари енĕпе йĕркелĕх тăвассишĕн тата тасалăхшăн кĕрешӳ пуçласа яратпăр. Цехсем, бригадăсем тата рабочисем хушшинче, пӳлĕмсемпе хваттерсем тата çуртсем хушшинче санитарипе гигиена тĕлĕшпе чи лайăх йĕрке тăвассишĕн социализмлă ăмăрту сарса ятатпăр.

Апрелĕн 15-мĕш тĕлне цехсенче, бригадăсенче, кашни рабочин ĕç вырăнĕнче эпир санитари енĕпе кăтартуллă йĕркелĕх туса хуратпăр. Кашни рабочи хăйĕн ĕç вырăнĕнчи тасалăхшăн, кашни бригадир — бригадăн ĕç вырăнĕнчи тасалăхшăн, кашни цех начальникĕ — цехри тасалăхшăн ответ тытать. Тумтир çакмалли, хывăнмалли вырăнсене, цехсенчи умывальниксене йĕркене кĕртетпĕр, кашни цехах вĕретнĕ шыв тултарса баксем лартса тухатпăр. Кашни кунах тĕплĕн шăлса тасатнисĕр пуçне, кирлĕ пулнă майăн уборка тăвассине организацилетпĕр, картлашкасене пурне те тĕплĕн тасататпăр. Санитари тумтирĕсене тасалăхра тытатпăр тата вĕсемпе тивĕçлĕ çĕрте çеç усă куратпăр.

Столовăйне кăтартуллă тасалăхра тытма пулатпăр, столовăйпа кухня чӳречисене сеткăсем çакса тухатпăр, унта шăнасем кĕрсе кайма ан пултарччăр.

Апрелĕн 20-мĕш тĕлне пур пӳлĕмсене те тата хваттерсене тĕплĕн тасатас ĕçе туса ирттеретпĕр. Апрелĕн 15-мĕш тĕлне уборнăйсене тата тасамар шывсене тăкмалли вырăнсене тасатса юсатпăр, малалла вĕсене санитари енĕпе тивĕçлĕ тасалăхра тытса усратпăр.

Апрелĕн 25-мĕш тĕлне килкартине тата çывăхри урама тислĕкпе ытти тасамарлăхран тасататпăр, малалла вĕсене пĕрмаях таса тытса усратпăр. Çулла уяр кунсенче килкартине тăтăшах шыв сапса тăратпăр, килкартинче, урамра тата заводăн хăшпĕр цехĕсенче йывăç курăксем лартса хăваратпăр.

Цехсенче пуринче те, килкартинче тата урамра çӳп-çап пăрахма урнăсем лартса тухатпăр, цехсене, конторăна, столовăйне тата пурăнмалли çуртсене кĕмелли вырăнсенче урасене тасатма решеткăсем хуратпăр.

Эпир Шупашкар хулинчи пур ĕççыннисене те хамăрăн фабрикăсенче, заводсенче, колхозсенче, учрежденисенче, шкулсенче, яслисенче, чугунçул станцинче, пристаньре, урамсемпе площадьсенче, пурăнмалли çуртсенче, больницăсенче, обществăллă пур вырăнсенче те тасалăх тата санитари енĕпе кăтартуллă йĕркелĕх тăвассишĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнма чĕнетпĕр.

Рабочисемпе колхозниксем, çамрăксемпе вĕренекенсем, учительсемпе врачсем, агрономсемпе инженерно-технически работниксем, Шупашкар хулинчи совет интеллигенцийĕ тата мĕнпур ĕççыннисем! Тасамарлăха тĕп тăвар, çапла вара ерекен чирсене саракан çăлкуçсенчен пĕрне пĕтерсе хурар! Çакна тума эпир пултаратпăр, вăл ĕç укçа-тенкĕ тĕлĕшпе тăкаксем тума ыйтмасть. Пĕрле кар тăрса ĕçлени çеç кирлĕ. Çак ĕç вăрçă условийĕсенче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланман çынсене ун çинчен ăнлантарса парăр.

Санитари режимне кăшт та пулин пăснине хирĕç те пĕр килĕшмесĕр кĕрешер!

Совет тылĕ çирĕп пултăр тесе кĕрешер, Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряжени тата продовольстви парса тăрар, совет çĕрне нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен тасатассишĕн паттăррăн кĕрешекен хамăрăн çар валли çирĕп сывлăхлă пополнени парса тăрар!

Чĕнсе каланине эрех заводĕнчи рабочисен, служащисемпе инженерно-технически работниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пĕрсаслăн йышăннă.

* * *

Эрех заводĕнчи рабочисен пуçарăвне ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ ырланă, партипе комсомол организацисене эрех заводĕнчи рабочисем чĕнсе калани-не учрежденисемпе предприятисенчи тата артельсенчи пĕрлешӳллĕ пухусенче сӳтсе-явса конкретнăй обязательствăсем илессине организациелеме хушнă.

Воскресникре активлăн ĕçлерĕç

ÇĔРПӲ. Иртнĕ канмалли кун районри комсомолецсемпе çамрăксем воскресникре активлăн ĕçлерĕç. Çав кун вĕсем районри колхозсемпе предприятисенче пурĕ 18 тонна тимĕр-тăмăр пухса чугунçул станцине леçрĕç. Воскресникре уйрăмах «Красная Паварня», «Красный Флот», «Союз», «Коминтерн», «Камай» колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем хастарлăн ĕçлерĕç.

А. ВАСИЛЬЕВ.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем апрелĕн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ воскресникре 15 тонна ытла тимĕр-тăмăр пухрĕç. «Партизан» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем 1144 килограмм, Тĕрер, Исаково тата ытти ялсоветĕсене кĕрекен колхозсенчи çамрăксем пĕрер тонна ытла тимĕр-тăмăр пухнă.

В. АРХИПОВ.

„Пионер Чувашии“ танк тума

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри шкулсенче Етĕрне хулинчи пионерсен активĕ «Пионер Чувашии» танк тумашкăн укçа пухма чĕнсе каланине сӳтсе-явас ĕç сарăлсах пырать.

Çак кунсенче çав чĕнĕве Хутарти вăтам шкулта вĕренекенсем сӳтсе-яврĕç. Шкул коллективĕ кĕске вăхăт хушшинчех «Пионер Чувашии» танк тума 2000 тенкĕ укçа пухрĕ. 10-мĕш класра вĕренекенсем Дария Казакова, Елена Павлова, Нина Васильева, Иван Ванюков тата Аврам Иванов кашниех танк тунă çĕре 50-шар тенкĕ, учительсем Моисеевпа Яковлев юлташсем — 150-шар тенкĕ, шкул директорĕ Петров юлташ — 165 тенкĕ пачĕç.

ÇĔРПӲ. Етĕрне хулинчи пионерсен пуçарăвĕпе «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕç районра сарăлсах пырать. Апрелĕн 7-мĕшĕ тĕлне «Пионер Чувашии» танк тума пурĕ 8.406 тенкĕ пухнă. Елашри туллимар вăтам шкулта вĕренекен ачасемпе учительсем «Пионер Чувашии» танк тума 1053 тенкĕ пухнă. 6-мĕш класра вĕренекен А. Павлов—61 тенкĕ, 7-мĕш класра вĕренекен П. Миронов—60 тенкĕ, В. Карпов—40 тенкĕ, Т. Борисова, М. Карпов, И. Ильин пионерсем—30-шар тенкĕ, 4-мĕш класра вĕренекен пионерсем А. Ильин—13 тенкĕ, П. Васильева—11 тенкĕ укçа пачĕç.

В. АЛЕКСАНДРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

[illegible]

...хатĕр, манăн киле кăна чĕрĕ пуçпа лекесчĕ,—терĕ». * * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Генрих Тамлен нумаях пулмасть Лкевенса-Ольденбург хулине семьи патне çапла çырса янă: «Вырăссем пире пур çĕрте те атакăлаççĕ. [illegible]

[illegible] ...тыçмак эсэсовецсем çапăçăр!» тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнсе кайнă. Нумай салтаксене арестлесе, конвойпа тĕрмене ăсатнă.

Фашистла оккупантсем Югославире çултăлăк хушши тискерĕн хуçаланни

СТАМБУЛ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). [illegible]

...Вĕсем Луковацри хими завочĕсене, Кральевăри авиазавода, мĕнпур сахăр завочĕсене тата ытти чылай предприятисене хăйсен аллине туртса илнĕ.

Уйрăмăнах Югославин çĕркăмрăк промышленноçĕн ĕçĕсем начар. «Берлинер берзенцейтунг» хаçатăн Белградри корреспонденчĕ çапла çырса пĕлтерет: Югославири çĕркăмрăк шахтисем нумайĕшĕсем ĕçлемеççĕ, «пур пек çĕркăмрăкĕ çар промышленноçне каять, çынсене хутма-тума çĕркăмрăкĕ юлмасть». Югославире кăларакан çĕркăмрăкне чылайĕшне урăх çĕршывсене илсе каяççĕ.

Фашистла оккупантсем хуçаланни уйрăмăнах ялхуçалăхне япăхтарнă, Югославин продовольстви ытуне йывăрлатнă. Оккупантсем Югославие пĕтĕмпех çаратса хăварнă, Югослави халăхĕ выçă ларать. Гитлеровецсен хаçачĕ «Берлинер берзенцейтунг» ирĕксĕрех çапла йышăнать: «Продовольстви енĕпе Югославин лару-тăрăвĕ кăçал сасар... [illegible]

...маççĕ; вĕсем тен пулĕ-ха тесе ĕмĕтленеççĕ. Булочнă умĕпе пĕр мăнтăртарах çын иртсе пырать, ун аллинче пĕр буханка çăкăр. Черетре тăракансем нумайĕшĕсем ăна сăрса илеççĕ: «Калăр-ха, ăçтан тупрăр эсир çăкăр? Унта тата юлчĕ-и-ха?» Аллине çăкăр тытнă çын мăшкăмаллăн кулкаласа çапла тавăрать: «Ку сире валли мар — ку нимĕçсем валли».

Югославире калама çук тискер террор пырать. Югослави халăхĕ парăнасшăн мар пулнишĕн тарăхса, оккупантсем хуласене, ялсене çунтараççĕ, халăхсене вĕлереççĕ.

Террор калама çук вăйлă пулсан та Югослави патриочĕсем çапах та хăрамаççĕ, пуçĕсене усмаççĕ. Партизансен йышлă отрячĕсем хăйсен тăван çĕршывне хăтарассишĕн пыракан кĕрешĕве, хăйсен ылханлă тăшманĕсене — оккупантсене хирĕç пыракан кĕрешĕве кунран-кун вăйлатса пыраççĕ.

Лайăх пахалăхлă вăрлăх акмалла

Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем çывхараççĕ. Тухăçлă тырпул туса илес тесен, çуракине кĕске срокра иртермелле тата лайăх пахалăхлă вăрлăх акса хăвармалла. Çуракинче акма кирлĕ лайăх пахалăхлă вăрлăхсене халех çителĕклĕ таран хатĕрлес пулать. Республикăри чылай колхозсем государствăна тырпул тăратас тĕлĕшпе хăйсен обязательствине пурнăçланă хыççăн вăрлăх фончĕсене чи паха тырпул çителĕклĕ таранах уйăрса хучĕç. Чылай колхозсем нимĕçсен вăрă-хурахла çарĕсем пулнă районсемпе облаçсенчи колхозсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшаççĕ.

Малта пыракан колхозсем вăрçă вăхăтĕнче вăрлăх фончĕсене вăхăтра çителĕклĕ таран уйăрса хуни мĕн тери кирлĕ тата пысăк ĕç пулса тăнине лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем вăрлăхлăх тырăсене кĕркуннех тасатса сортларĕç, тивĕçлĕ кондицие çитерчĕç. Анчах та хăшпĕр колхозсем вăрлăхсене хатĕрлесе çитереймен-ха. Нумай колхозсенче вăрлăхлăх уйăрнă тырăсен нӳрĕлĕхĕ пысăк. Çавăн пек нӳрĕ вăрлăхсем çуркуннехи йĕпе-сапа çанталăкра пăсălма, шăтас пахалăхне чакарма пултараççĕ. Çакна вăхăтра асăрхаса илсе, Ишлей, Вăрнар тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем нӳрĕ вăрлăхсене пӳртри условире типĕтме тытăнчĕç. Тĕслĕхрен, Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз сĕлĕ вăрлăхне колхозниксен пӳрчĕсенче сарса типĕтрĕ, вĕсен нӳрĕлĕхне агротехника ыйтнă пек 15 процента çитерчĕ. Сĕлĕ вăрлăхне çавăн пек пӳртри температурăра сарса вырттарнипе, вăрлăхăн шăтас пахалăхне 92 процента çити хăпартнă.

Райçĕрĕç пайĕсенчи хăшпĕр работниксем, агрономсем тата вăрлăхсене тĕрĕслекен лабораторисенче ĕçлекенсем кăçалхи условисенче вăрлăхсене акма лайăх хатĕрлесе çитерес ĕç мĕн таран кирлине шута илмеççĕ. Çавăн пек работниксем вăрлăхăн пахалăхне тĕрĕс палăртас ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Вăрлăхсене кирлĕ пек тĕрĕслемесĕрех, вĕсене типĕтсе тивĕçлĕ кондицие çитерме май пур çĕртех, юрăхсăр тесе «Заготзерно» пункчĕсенче урăх тырăпа улăштарма пăхаççĕ.

Иртнĕ çул хăшпĕр колхозсенче вăрлăхсен нӳрĕлĕхĕ пысăк пулчĕ, хĕллехи сивĕ çанталăкра вĕсем çаплипех тăчĕç. Çапла вĕсен шăтас пахалăхĕ те чакрĕ. ...ллах, çавăн пек вăрлăхсене хăвăртрах ăштармалла. Çывăхри колхозсенчен е «Заготзерно» пункчĕсенчен лайăхрах вăрлăх улăштарса илме тăрăшмалла.

Вăрлăхсен шăтас пахалăхне палăртас ĕçе тимлĕн тăвас пулать. Ăна тĕрĕс тĕпчесе палăртнă хыççăн çеç, акма юрăхсăр пулсан, лайăх вăрлăхсемпе хăвăртрах улăштармалла. Иртнĕ çул нумай çĕрте вăрлăхлăх тырăсене сивĕ çанталăкра çапмалла пулчĕ. Çапла вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ тивĕçлĕ виçене лармалла пултараймарĕ, вĕсене çапса пуçтарнă хыççăн пиçсе çитесси вĕçлешеймерĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене ăшă çĕрте выртарма май килмерĕ. Çакăн пек вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕс тĕпчесе пĕлес тесен, вĕсене пӳртре е шӳртри пек ăшă пӳлĕмсенче 5—7 кун хушши тытас пулать. Çакăн хыççăн çеç вара вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслес пулать. Çавăн пек тума пире академик Т. Д. Лысенко вĕрентет.

Вăрнар районĕнчи вăрлăхсене тĕрĕслес енĕпе ĕçлекен лаборатори заведующийĕ Данилов юлташ, академик Т. Д. Лысенко хушнă пек, вăрлăхлăх тырăсен шăтас пахалăхне вĕсене малтан 5—7 кун хушши пӳртри условире тытса тĕпчеме тытăннă. Вара çакна асăрханă: Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн вика вăрлăхне тĕрĕсленĕ хыççăн унăн шăтас пахалăхĕ 40 процент пулнă, пӳртре 6 кун хушши сарса вырттарнă хыççăн викăн шăтас пахалăхĕ 82 процента çити ӳснĕ. Кĕçтемĕр колхозĕн çурхи тулă вăрлăхĕн шăтас пахалăхĕ 73 процент пулнă, пӳртри условире типĕтнĕ хыççăн, туллăн шăтас пахалăхĕ 83 процента çитнĕ. Улатăр райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Мокеев юлташ та çавăн çинчен пĕлтерет.

Вăрлăхсене акма хатĕрлесси государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Пирĕн республикăри колхозсем иртнĕ çул пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кăçалхи çуракинче паха вăрлăхсем акма, вĕсене тĕрĕслесе тухса тивĕçлĕ пахалăха çитерме пирĕн пур условисем те пур. Çураки пуçланаччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Çак кунсенче колхозсен вăрлăхлăх тырăсене уйăрса çитермелле, вĕсене тасатса сортламалла, нӳрĕлĕхне тата шăтас пахалăхне тĕрĕслемелле, тивĕçлĕ кондицие çитермелле. Нӳрĕ тата шăннă тырăсене пӳртри температурăра тытса типĕтес ĕçе колхозсен халех организацилемелле.

Г. МАРТЫНОВ.

ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ.

Оккупантсем Югослави халăхне тискеррĕн асаплантараççĕ

СТАМБУЛ, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Кунта халĕ çакă паллă пулнă: нумаях пулмасть Топлица тата Ябланица районĕсенче Югослави партизанĕсем Недичăн сутăннă войскисемпе тата Серби территорийĕ çине нимĕçсем хушнипе кĕрсе кайнă Болгарин чаçĕсемпе тытăçса илнĕ. Лесковая çывăхĕнчи Бойник ялĕнче (Ябланица районĕ) Югослави патриочĕсем болгарсен 20 çынран тăракан пĕр пĕчĕк отрядне атакăласа пĕтерсе тăкнă. Болгари войскисем, партизансемпе кĕрешес вырăнне, вырăнти халăха асаплантарма тытăннă. Вĕсем Бойник ялне тата кӳршĕри икĕ яла пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартнă. Ялсенчи халăха: хĕрарăмсене, ватă çынсене, ачасене орудисенчен тата пулеметсенчен пере-пере вĕлернĕ.

Болгари чаçĕсем нимĕçсемпе пĕрле тата тепĕр преступлени Ниш районĕнче тунă. Ку районра концентрациллĕ лагерь пур. Унта Югослави патриочĕсене темиçе çĕр çынна хупнă. Вĕсене çын тӳсме пултарайман условисенче тытаççĕ. Нумаях пулмасть тыткăнри патриотсен группи икĕ хуралçа вĕлерсе лагерьтен тухса тарнă. Нимĕçсен тата болгарсен чаçĕсем лагере хупăрласа илмĕ те унти сербсене пурне те персе пăрахнă. Ирсĕрсене кунпа та çитмен. Çав нимĕçсемпе болгарсем татах темиçе çĕр заложнике персе вĕлернĕ.

Сербире халиччен çын курман террор пырать. Курнă çынсем каланă тăрăх, алла пăшал тытса тусем хушшине тарса тухсан тин хăвна ху чиперех сывă пурăнатăп-ха тесе калама пулать. Недичăн полицийĕ пур хуласенче те хура списоксем тунă. Çав списока хальхи йĕркепе килĕшмесĕр тăракансене пурне те кĕртнĕ. Кашни хуларах вĕлермелли тунă заложниксене темиçе ушкăн тытаççĕ. Пĕтĕм Серби халăхне куннеçĕрне пăхмасăр нимĕçсен, болгарсен тата Недичăн карательнăй отрячĕсем хăратса тăраççĕ.

Криппс Индире калаçусем ирттернĕ май

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви Делирен çапла пĕлтерет: национальнăй конгресăн исполком бюровĕ хăй йышăннă решенийĕн проекчĕ çине Англин çар кабинечĕ мĕнле пăхни çинчен пĕлтерӳ илнĕ. Исполком бюровĕн решенийĕ çине Англин çар кабинечĕ панă ответа Криппс конгресс председательне Азада тата Неруна апрелĕн 7-мĕшĕнче панă.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче Криппс мусульмансен лигин председателĕпе Джиннăпа курнăçса калаçнă, Азадпа Неру Рузвельтăн личнăй представителĕпе Джонсон полковникпе курнăçса калаçнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, конгресс исполкомĕн бюровĕ хăйĕн малтанхи решенинех çирĕплетсе хăвармалла тесе йышăннă, Инди çĕршывне Англи правительствин сĕнĕвĕсене йышăнма хушман.

Пĕтсе пыракан Франция

ЖЕНЕВА, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Франци пичечĕ çапла çырса пĕлтерет: официальнăй даннăйсем тăрăх, хальхи вăхăтра Францире пурăнакан халăх хисепĕ мĕнпурĕ те 40 миллиона кăна çитет, 1937 çулта пулса иртнĕ перепись тăрăх, ун чухне Францире 41.835.000 çын пурăннă.

Салтаксемпе офицерсем 135.000 çын 1940 çулти май уйăхĕпе июнь уйăхĕсенче пулса иртнĕ çапăçусенче вилнĕ, 50.000 çын сывлăшран тапăннă чухне тата çавăн пекех вăрçăн ытти инкекĕсенчен пĕтнĕ. Темиçе вунă пин француза гитлерла оккупантсем асаплантарса вĕлернĕ. Нумайăшĕ Африкăна, Англие е Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тухса тарнă. Çак цифрăсене шутламасан тата французсен чылаях пысăк пайĕ нимĕçсен тыткăнĕнче вилсе пĕтнине асра тытсан, «Аксьон Франсез» хаçат шутланă тăрăх, юлашки пĕр-икĕ çул хушшинче француз халăхĕ пĕр миллион çынран кая мар выçăпа, çуклăхпа, вăрçăпа тата Францири оккупациллĕ режима пула сиксе тухнă тĕрлĕрен чирпе вилсе пĕтнĕ.

Халăх шучĕ, пуринчен ытла пысăк хуласенче,—Францин оккупациленĕ зонинче те, оккупациленмен зонăра-и, пур пĕрех—вăйлăн чакса пырать. Марсельре 801.000 çын пурăннă, халĕ 729.000 çын кăна юлнă, Лионра 580.000 çын пулнă, халĕ унта 450.000 çын çеç пурăнать, Бордо хулинче 265.000 çын пурăннă, халĕ 230.000 çын кăна юлнă.

Лавальпе Петэн хушшинчи калаçусем çинчен АФИ агентстви пĕлтерни

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕш. (ТАСС). Лаваль нумай вăхăт хушши хăйне палăртмасăр тăнă. Юлашки вăхăтра вăл политика тĕлĕшпе каллех пысăк активлăх кăтартать. Эрне çитет ĕнтĕ, Лаваль Парижра калаçусем туса ирттернĕ, вара вăл Вишире Петэнпа тĕл пулнă. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Петэн патĕнче хăйне Виши правительствине мĕнле условисемпе кĕртме май пурри çинчен калаçнă. Анчах Петэн ăна хăй правительствин составне кĕртме килĕшмен пулать. Çак хыпарсем пирки АФИ агентстви çапла кăтартса парать: французсен Лондонри колонийĕнче калаçнă тăрăх, Петэн Лавале хăй правительствин составне кĕртме килĕшмен пек пулни халăха улталани кăна, çавăн пек маневр туса ирттерме Петэна Берлинран хушнă, теççĕ. Халăхăн Петэна хирĕç тăракан вăйне çемçетес тесе, Франци халăхĕ кăшт та пулин Петэнпа килĕшсе пурăнтăр тесе, Гитлер хушнипе, Лаваль Вишири правительствăна таврăнма хăтланни ăнăçсăр пĕтни çинчен пĕлтермелле пулнă. Гитлер çапла майпа Петэна татах та ытларах хăй майлă çавăрма пулĕ тесе шанать, вара Петэн Гитлерпа пĕтĕмĕшпех килĕшсе ĕçлесси çинчен ĕмĕтленет. Лаваль Виши правительствинче ĕçлеме пуçлани Франци халăхне Виши правительствин никама та пăхăнмалăхĕнчен тĕсĕ те юлманнине питех те уççăн курма пулăшнă пулĕччĕ.

Александрия çине сывлăшран тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан çапла пĕлтерет: паян ирхине Александрия çине каллех сывлăшран вĕçсе пырса тапăннă. Египетăн шалти ĕçсен министерстви кăларнă коммюникере пĕлтернĕ тăрăх самолетсем пăрахнă бомбăсем пысăк сиенсемех туман, вилнисемпе аманнисем çук.

Мальта çине сывлăшран тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕш. (ТАСС). Мальта утравĕнче кăларнă черетлĕ коммюникере çапла каланă: тăшманăн авиацийĕ ĕнер те çаплах утрава атакăларĕ. Нимĕçсен йышлă самолечĕсем, вăл шутра пикировка тăвакан бомбардировщиксем те, Мальтăри главнăй гавань районĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Çавăн чухне противникăн авиацине чылай пысăк çухатусем кӳнĕ. Зенитнăй артиллери «Юнкерс-88» йышши 2 самолета тата «Мессершмитт—109» йышши 2 самолета персе антарнă, çавăн пекех тата тепĕр «Юнкерс-88» самолета персе антарнă пулмалла, икĕ «Юнкерс-88» самолета тивертсе сиен тунă.

БРЮССЕЛЬРИ ПĂЛХАНУСЕМ

Гитлера хирĕçле движени Бельгире сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Нумаях пулмасть Брюссельре пысăк пăлханусем пулса иртнĕ. Сăлтавĕ çакăнтан тухса кайнă: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне «добровольцсем» текенскерсене яма хăтланнă. Хулари халăх çав сĕтĕрĕнчĕксене урамра тăрăх пыма чарса лартма тăнă. Тытăçса çапăçма пуçланă. Вилнисем те, аманнисем те чылаях пулнă. (ТАСС).

ВĂРМАН ПУШАРĔСЕМПЕ КĔРЕШЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, 1942 çулти апрелĕн 6-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, кăçалхи çул вăрман пушарĕсемпе кĕрешекен тройка тунă. Унăн председателĕ — Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ М. Ф. Терентьев юлташ, членĕсем—Чăваш республикинчи вăрмана сыхлас тата вăрман лартас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени начальникĕ Ф. В. Васильевпа Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн пушартан сыхланас енĕпе ĕçлекен отделĕн начальникĕ М. А. Шарко юлташсем.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсене вăрманти пушарсемпе кĕрешекен çакăн пек тройкăсене районсенче те тума хушнă. Районсенчи тройкăсен составне. ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕн председателĕ, лесхоз директорĕ тата Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн районри отделенийĕн представителĕ кĕмелле.

Красноармеецсен çемьисене пулăшни

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр). Пирĕн государство совет воинĕсен çемьисене куллен пысăк пулăшу парса пырать. СССР Верховнăй Совет Президиумĕ красноармеецсен çемьисене пособи парасси çинчен йышăннă Указ тухнă хыççăн кăна районри собес уйрăмĕ 1.053.258 тенкĕ тӳленĕ. Вăл шутран кăçалхи çулта 10.103 тенкĕ панă.

Хальхи вăхăтра государствăран пособи йĕркипе çĕршер çемье укçа илсе тăрать.

Красноармеецсен çемьисене вырăнти организацисем те пысăк пулăшу параççĕ. Сăмахран, колхозсенче темиçе вуншар пăт тырă панă, вутă турттарма пулăшнă, предприятисемпе учрежденисем укçа панă, ĕçе вырнаçтарнă т. ыт. те. Собес уйрăмĕ кăна район бюджетĕнчен красноармеецсен çемьисене 3 пин тенкĕ ытла тӳленĕ.

Х. ЛИСИН.

Колхозсенчи пулăшу кассисем

ÇĔРПУ. «Красный самолет» колхоз çумĕнчи пулăшу касси çултан çул ӳссе вăйланса пырать. Паянхи куна касса членĕнче 67 çын тăрать. Касса членĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарса пыраççĕ. Иртнĕ çулта 1.009 тенкĕ пухса плана ытлашшипех тултарнă.

Пулăшу касси отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче тăван çĕршыва хӳтĕлеме кайнă красноармеецсен çемьисене куллене х пулăшса пырать. Вăрçă пуçланнăранпа красноармеецсен çемьисене 83 пăт тĕштырă парса пулăшнă. Унсăр пуçне красноармеецсен ачисене 440 тенкĕлĕх кĕнекесем, кĕпе-тумтирсем илсе панă.

Рындинăри «Новая жизнь», «Серп», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем çумĕнче те пулăшу кассисем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем красноармеецсен çемьисене пулăшса темиçе 100-шер пăт ытла тырă панă.

Г. ПЕТРОВ.

Совет Союзĕ тăрăх

▲ Комаров, Чудаков, Иоффе, Лысенко академиксем тата ытти ученăйсем танксен колонни тума укçа пухма чĕнсе каланине Совет Союзĕн Наукăсен Академийĕн Азербайджанри филиалĕн коллективĕ пысăк кăмăлпа хапăл туса йышăнчĕ. Унти ученăйсем укçаллă лекцисем вулама тытăннă. Пухăннă укçа тата лекторсене тӳлемелли укçа танксем тумалли фонда каять. Филиалăн научнăй работникĕсем танксен колоннине тума пĕр кунхи ĕçукçине параççĕ.

▲ Ярославль облаçĕнчи Тутаевски районри колхозниксем çураки планĕнчен ирттерсе оборона гектарĕсем акаççĕ. Унта вĕсем çĕрулми, сухан, купăстасем лартса тăваççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ

главные и старшие бухгалтера для работы на периферии и ст. бухгалтера-ревизоры для работы в г. Чебоксарах.

Обращаться: гор. Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, д. № 2, к тов. Честнокову.

1—1.

Чебоксарской межрайконторе Главзаготскот Центра

требуются на постоянную работу:

главный бухгалтер, бухгалтер, приемщик скота, закупщик скота, старший проводник скота, рабочие по уходу за скотом, конюх, техничка-рассыльная.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Ярмарочная площадь, дом № 53

Клевер вăрлăхĕ пирки

Нумай çул ӳсекен курăксене, уйрăмах клевера акса туни пирĕн Чăваш республикинче мĕнле пысăк вырăн йышăннине пурнишĕн те паллă. Клевер çĕрĕн структурине лайăхлатать, çĕрĕн тухăçлăхне хăпартать. Клевер хăй хыççăн акăнакан тырăсен тухăçлăхне 25—30 процент таран ӳстерет. Вăл выльăх апачĕн базине тăвас çĕрте нумай пулăшать. Çавăнпа та пирĕн республикăри колхозсен пусуçаврăнăшĕнче клевер хăйĕн вырăнне йышăнма тивĕçлĕ.

Совет Союзĕн правительствипе партин Центральнăй Комитечĕ нумай çул хушши ӳсекен курăксем акса тăвас ĕçе пысăк вырăна хураççĕ. Вĕсене акса тума колхозсене пысăк пулăшу параççĕ, çав курăксен вăррисене тухăçлăн туса илме чĕнеççĕ.

Чăваш республикинчи колхозсем, партипе правительство чĕнни çине ответлесе, нумай çул хушши ӳсекен курăксене акса вĕсен вăрлăхĕсене пысăк тухăçлăн туса илме пултараççĕ. Кăна тума пирĕн пур условисем те çителĕклĕ. Клевер тата ытти курăксен вăррисене эпир хамăра валли акмалăх çеç мар, ытти республикăсемпе облаçсене памалăх та тума пултаратпăр.

Партипе правительство, пĕтĕм çĕршыв пирĕнтен фронта аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем ытларах туса пама ыйтаççĕ. Кăна эпир нумай çулсем хушши ӳсекен курăксене акса, выльăх апачĕн базине вăйлатсан çеç ăнăçлăн тума пултаратпăр.

Çакна республикăри малта пыракан колхозсем лайăх ăнланса илнĕ, вĕсем нумай çул хушши ӳсекен курăксене хăйсен уйĕсенче акса, вĕсен вăрлăхĕсене тухăçлăн туса илеççĕ. Тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи «Правда» тата «Красный Курган», Пăрачкав районĕнчи «Победа» тата ытти колхозсем, клеверăн вăрлăхне çулсерен пысăк тухăçлăн туса илсе, ăна государствăна сутаççĕ, çапла чылай тупăш илеççĕ. «Победа» колхоз 1941 çулта клевер вăрлăхĕ сутса 101 пин тенкĕ тупăш тата 240 центнер тырă илчĕ. Çак колхозсем, иртнĕ çул кĕркунне çанталăк япăх тăнă пулсан та, клевера вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕрсе çапрĕç, 1942 çулта акма хăйсем валли çителĕклĕ вăрлăх хатĕрлерĕç. Анчах республикăри нумай колхозсем клевер вăрлăхĕ туса илес, ăна вăхăтра пухса кĕрес ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ. Ăна пуçтарса çапса хурассине ытти тырăсенчен кая хăвараççĕ. Çапла чылай колхозсен тата районсен руководителĕсем клевера манăçа хăварнă.

Пирĕн республика клевера çапса вăррине шĕкĕлчес ĕçе мартăн 20-мĕш тĕлне 24 процент çеç пурнăçланă. Улатăр, Кувакино, Первомайски, Чкаловски районсем клевер çапас ĕçе халĕ те тытăнман-ха. Куславкка, Елчĕк, Шăхасан, Сĕнтĕр районĕсем те ку тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. Мартăн 20-мĕш тĕлне клевер çапас ĕçе Куславкка районĕ 2 процент, Елчĕк районĕ 6 процент, Шăхасан районĕ 8 процент, Сĕнтĕр районĕ 8 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ. Райçĕрĕç пайĕсем тата МТС-сен руководителĕсем, колхоз председателĕсемпе ялхуçалăх ĕçĕнчи специалистсем, райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем те клевера вăхăтра çапса пуçтарас ĕçе тивĕçлипе хакламан. Клевер вăрлăхне çапса илес ĕçе районсене панă график тăрăх февралĕн 15-мĕш тĕлне вĕçлемелле пулнă. Анчах графика чылай районсем пурнăçламарĕç. Пăрачкав районĕ кăна ĕçе кирлĕ пек организацилесе ирттерчĕ.

Калас пулать, хăшпĕр колхозсенче ку тĕлĕшпе ĕç калама çук начар тăрать. Кăçал пулнă клеверăн вăрри сахал тесе хăшпĕр çĕрте ăна çапса аппаланасшăн та мар; вăрлăхлăх тунă клевера выльăхсене çитерсе янă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ. Çакăн пек киревсĕр шухăшсене халех пĕтермелле, вĕсем государствăн интересĕсене хирĕç пыракан шухăшсем. Халĕ клевер вăрлăхĕн кашни килограмĕ питĕ кирлĕ. Çавăнпа кашни пуç клевера çапас пулать, вăрлăхне уйăрса илес пулать. Клевер вăрлăхĕ кăçал пысăк тухăçлă пулчĕ. Анчах ăна вăхăтра пуçтарса кĕртмен пирки, çулнă хыççăн купара нумай вăхăт лартнă пирки тата вăхăтра çапман пирки пысăк тăкаксем пулчĕç.

Республикăра акма кирлĕ клевер вăрлăхне мартăн 20-мĕш тĕлне 13 процент çеç уйăрса хунă. Первомайски район акма кирлĕ вăрлăхăн 1,3 процентне кăна уйăрса хунă, çавăн пекех Чкаловски, Шăмăршă, Елчĕк районĕсенче те клевер вăрлăхне хатĕрлес ĕç япăх пулса пырать.

Клевер акас тĕлĕшпе государство панă плана пирĕн кăçал пурнăçламалла. Акма кирлĕ вăрлăха хамăрăн республикăрах тупса çитермелле. Государствăран вăрлăх ыйтма пирĕн нимĕнле сăлтав та çук. Кашни колхозрах клевера халех типĕтсе çапма тытăнмалла. Аякран кӳрсе килсе парасси çине шанмалли çук, кашни колхозăн акмалăх вăрлăх вырăнтах хатĕрлемелле, вăрлăхлăх ӳстернĕ клевера йăлтах çапса шĕкĕлчемелле.

Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем, ĕлĕк уйрăм хуçалăхра пулнă ĕç опытне каялла тавăрса, клевера пуçĕпех, шĕкĕлчемесĕрех, акатпăр тесе лăпланса лараççĕ. Вĕсене асăрхаттарса çакна калас пулать: вĕсем хăйсен хуçасăрлăхĕ пирки, ĕçе вăхăтра организацилесе ирттерме ӳркеннĕ пирки çавăн пек паян çынсен опытне илме шухăшласа вăхăта сая яраççĕ пулсан, çавна пула ĕçе халĕ те тивĕçлĕ пек тума тăрăшмаççĕ пулсан, вĕсем государство умĕнче преступлени тăваççĕ.

Вăрлăхлăх клевера çапма халех тытăнмалла. Пĕлсех тăрас пулать, ăна пирĕн типĕтсе çапма тивет. Çавăнпа вăхăта сая ямасăр ăна типĕтме тытăнас пулать. Сушилкăсем çителĕксĕр пулсан кăмакасем çинче типĕтес ĕçе те организацилемелле.

Çапнă вăрлăхсене сортлас пулать, тивĕçлĕ кондицие çитерсе, шăтас пахалăхне тĕрĕслес пулать. Çак ĕçсене пурне те апрелĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса çитермелле.

Нумай çул хушши ӳсекен курăксене акас тĕлĕшпе государство панă плана пирĕн кăçал хамăрăн вăрлăхсемпех пурнăçламалла.

А. БЕЛЯЕВ.

ЧАССР Наркомземĕн агротехникăпа механизаци управленийĕн главнăй агрономĕ.

От Наркомфина Чувашской АССР

В соответствии с указанием Государственной Штатной Комиссии при Совнаркоме Союза ССР и Народного Комиссариата Финансов Союза от 20 марта 1942 г. за №-191

ВСЕ УЧРЕЖДЕНИЯ, ПРЕДПРИЯТИЯ И ОРГАНИЗАЦИИ

Чувашской АССР обязаны не позднее 1 мая 1942 г.

ЗАРЕГИСТРИРОВАТЬ

в соответствующих финансовых органах штаты, ставки и фонды заработной платы, а также сметы административно-хозяйственных расходов, утвержденных на 1942 год.

Регистрация проводится в порядке, установленном инструкцией НКФ СССР от 31 марта 1941 года за №246/36.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство кочторин — 0—23.

НТ 89. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: м: